Вылькăх-чĕрлĕх отраслĕн ыйтăвĕсемпе

Йăлтах хамăртан килет

Кăçалхи 9 уйăх хыçра ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшле районĕпе çак хушăра аш та, сĕт те иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен ытларах туса илнĕ. Ку вăл ял хуçалăх, фермер, килти хушма хуçалăхсенче туса илнине пĕтĕмпе шутласан. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе уйрăммăн илес пулсассăн вара кăтарту çакăн пек. Иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен аш 6,4 процент нумайрах туса илнĕ, сĕтпе вара пĕлтĕрхи шая çитеймен, çавăнпа та çак эрнере пулса иртнĕ районти ял хуçалăх предприятийĕсен зоотехникĕсен канашлăвĕнче пăхса тухнă пур ыйту та çак тĕп ыйтусемпе çыхăнчĕ: мĕн тумалла малалла вылькăх-чĕрлĕх продукцине ытларах илес, унăн хăй хаклăхне чакарас тесен?

Район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов ларура ку тĕлĕшпе хуçалăхсене 3 пая пайлама май пуррине палăртрĕ. Пĕрисем, йывăрлăхсене пăхмасăр, малаллах турăнаççĕ, çĕнĕлле ĕçлеме тăрăшаççĕ. Теприсен кăтартусем чаксах пыраççĕ. Виççĕмĕшĕсем вара йывăрлăхсемпе килешсе лараççĕ, татăклă пĕр утăм та тумаççĕ. Ку вăл, Юрий Александрович калашле, пĕр пек условисенчех çапла пулса пырать, мĕншĕн тесен хĕвел кашни хуçалăхри çынсем çине те пĕр пек пăхать. Çумăрĕ тĕлтĕл çумасан та, ытти вара йăлтах хамăртан килет. Çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕç зоотехниксем юн кун.

Ильичсем пек ĕçлемелли пирки иккĕленӳ çук

Ку чăннипех çакăн пеккине вара Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем хăйсен тĕслĕхĕпе çирĕплетеççĕ. Семинар-канашлу пуçламăшĕнче унта хутшăнакансем шăпах асăннă хуçалăхра пулса курчĕç. Ильичсем районта малта пынине паян пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çитĕнӳ хăйне хăех килменни те никамшăн та вăрттăнлăх мар. Асăннă хуçалăх ертӳçи И. В. Николаев хуçалăх пĕр вăхăтра анса ларма патнех çитнине пытармасть.

–Пĕр ĕнерен вăтамран çулталăкра 2800 килограмм сĕт суса илнĕ, – тет вăл.

Паян вара Ваçкасси тăрăхĕсем 9 уйăхрах ку кăтартăва 3443 килограма çитерчĕç.

Йывăрлăхран тухмалли пĕрремĕш утăма вара вĕсем пăрусемпе ĕçлессинчен пуçланă. Мĕншĕн тесен пăрусем вилеслĕхĕ те пысăк пулнă.

–Чи малтанах пăрусем валли карта турăмăр. Унтан самăртмалли ушкăнрисен витине юсарăмăр. Виççĕмĕш утăм вара – ĕнесемпе ĕçлеме пуçларăмăр. Унччен сĕт 2-мĕш сортпа кайнă хуçалăхран, – каласа парать Игорь Васильевич. – Çулталăк каялла 1млн. та 130 пин тенкĕ парса сĕт сивĕтмелли оборудовани илтĕмĕр. Пĕр çулталăк ĕнтĕ сĕте 1-мĕш сортпа ăсататпăр сĕт-çу заводне. Тĕллевĕмĕр халь – сĕте пысăк пахалăхлă сортпа ăсатмалла тăвасси.

Ку ĕмĕт ĕмĕтрех юлмасси те куçкĕретех. Уйăх каялла кунта сĕт пăрăхне хута янă. Тепĕр 1 миллион та 113 пин тенке ларнă çакă.

Хаклă япала хăй хакне кăларнине ăнланать кунти ертӳçĕ. Сĕт ĕне çиллинчен тӳрех сивĕтмелли оборудованине çитмелле. Çакăнта сĕт пăрăхĕн пĕлтерĕшĕ пысăк. Çапла майпа сĕт пахалăхĕ пĕрре те çухалмасть. Паллах, сĕт пăрăхĕсене требованисемпе килĕшӳллĕн пăхса тăрсан. Оборудовани илме тухса кайнă укçана та ертӳçĕ сĕт, вылькăх-чĕрлĕх продукцийĕпех тавăрма шутлать. Апла пулсан, тата та тухăçлăрах ĕçлемелле.

Паянччен Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра тунă утăмсем Игорь Васильевичăн, апла пулсан ку хуçалăхра ĕçлекенсен тепĕр ĕмĕчĕ те пурнăçланасси пирки калаççĕ. Вăл вара çакнашкал: вылькăх-чĕрлĕх продукцин хăйхаклăхне чакарасси, çын ресурсĕсене сахаллатасси. Çавăнпа çитес çул Ильичсем вылькăх апачĕ валеçекен оборудовани туянасшăн.

Перекетлĕх патне илсе каякан тепĕр утăма вара кунта кăçалах тăвасшăн.

–Çаплах вылькăхсене пăтă пĕçерсе парса электроэнергишĕн тӳлесе çитереес çук. Кăçал çулталăк вĕçлениччен тĕрлĕ тырă хутăшĕнчен вылькăхсем валли типĕ апат(экструдированный корм) вырăнтах хатĕрлеме пуçласшăн, – малалла паллаштарать хуçалăхри лару-тăрупа унăн ертӳçи. – Малашне вылькăхсем валли лапчăтнă тырă хатĕрлеме пуçласси пирки те шутламах тивет.

Район пуçлăхĕ асăннă хуçалăхăн тепĕр ырă палăрăм пуррине те палăртрĕ. Нумай çĕрте малтан тунă кану кĕтесĕсемпе çăвăнмалли пӳлĕмсене юрăхсăра кăларнă пулсан, кунта вара вĕсене те сыхласа хăварнă.

Сăлтавĕсем те, çул-йĕр те паллă. Ĕçлемелле çеç

Ахальтен асăнмарĕ çак тĕслĕхе Юрий Александрович. Мĕншĕн тесен шăпах ĕç условийĕсенчен пуçланать фермăна кадрсем килесси. Çавăнпа та халь çеç асăннă тĕслĕхпе пĕрлех ферма ĕçченĕсене ăшă тумтирпе тивĕçтересси те хуçалăх ертӳçин яваплăхех пулмалла.

– Ферма ĕçченĕсене тивĕçлĕ ĕç укçипе тивĕçтермелле, – палăртсах каларĕ район пуçлăхĕ. Вара фермăсенче ĕçлеме çын çук тени илтĕнмĕ. Тухăçлăх, ĕçлес хăват та тапса тăрĕ вĕсенче.

– Ĕç условийĕсем пуррипе çукки продуктивлăх çине тӳрреммĕн пырса лекет, – татсах каларĕ Юрий Александрович.

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра акă кадр проблеми çук. Ку мĕн çинчен калать? Аçта ертӳçĕсем ĕçе пĕлсе йĕркелеççĕ, унти фермăсенче çынсем те çитеççĕ, вылькăх-чĕрлĕх продукцине те йĕркеллех туса илеççĕ, унăн пахалăхĕ те лайăх.

Ильичсем пек тĕслĕх илмелли хуçалăхсем ку тĕлĕшпе татах та пур

– Сĕт пахалăхĕпе çавăн пекех "Оринино" хуçалăх та ырăпа палăрать. Вĕсен те сĕт пăрăхĕ пур. Кăшт турăнсан, "Ударник", Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем (кунта та сĕт сивĕтмелли оборудовани пур) те пысăк пахалăхлă сĕт леçме пултараççĕ сĕт-çу заводне. Çак кунсенче акă "Геройсем" кӳрсе килнĕ сĕт пăрăхне.

Палăртсах хăвармалла, "Герой" 9 уйăх пĕтĕмлетĕвĕсемпе кашни ĕнерен сĕт сăвассипе 4 пинлĕ чикĕрен каçрĕ ĕнтĕ. Пăрусем илессипе те асăннă хуçалăх ырăпа палăрать. Чкалов, Суворов ячĕпе хисепленекен, "Оринино", "Свобода" хуçалăхсем те сĕт сăвассипе 4 пинлĕ чикке çитес шанчăк пур. Апла пулсан йăлтах хамăртанах килет. Иртнĕ çул "Лидерта" сĕт пăрăхĕсĕрех пахалăхлă сĕт туса илни те çакнах çирĕплетет: пĕтĕмпех ĕçе йĕркелеме пĕлнипе çыхăннă.

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пулнă хыççăн çавра сĕтел хушшинче пулса иртнĕ калаçура та сăмах кĕтĕве çĕнетессипе хытă ĕçлемелли пирки пычĕ.

–Унсăрăн хăть мĕнле çитерсен те продуктивлăх ӳсмĕ. Паян сĕтĕн пĕр литрне сĕт-çу завочĕ 12 тенкĕпе йышăнать. Сысна ашĕн хакĕ те пĕр вăхăт анса ларнă хыççăн йĕркене кĕрсе пырать. Апла пулсан çулсем уçăлсах пыраççĕ. Пĕр литр сĕтпе пĕр литр топливо илме пулать пулсан, эппин, пурăнатпăр-ха. – Район пуçлăхĕн Ю. А. Иванованăн çак сăмахĕсем хуçалăх ертӳçисемпе специалисчĕсене кĕтĕве çĕнетессипе, вылькăхсен йышне ӳстерессипе çанна тавăрса ĕçлемелли пирки калать. Тата вылькăх апатне çителĕклĕ те пахалăхлă хатĕрлессипе тимлемелли пирки те.

Вылькăх апачĕ тенĕрен, семинарта хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă кашни зоотехниках çакна палăртрĕ: вылькăха кирлĕ апата ăна çителĕклĕ памасан, продуктивлăх пирки шутламалли те çук. Район пуçлăхĕ вылькăх апатне хатĕрлемелли технологине пăхăнни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртсах каларĕ. Сенаж вырăнне силос хатĕрленипе малаллах кайма çук пулĕ.

Кăçал нихăш хуçалăхрах та тата фуражлăх тырă хĕл каçма çитмест пулĕ. Çавăнпа та район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А. Н. Иванов калашле, вылькăха кирлĕ тырра, хушма апатсене туянни хăйĕн хакне кăларатех. Тен, кунта кредит илме те шикленмелле мар пулĕ.

Ытларах продукци илес тесе вара тĕрлĕ хуçалăх тĕрлĕ енĕпе ĕçлет. "Геройсем" концентрат тивĕçлĕ чухлĕ параççĕ вылькăхсене. Тĕрлĕ ӳсĕмри вылькăхсен хăйсен рационĕ. Çакна кунта çирĕп пăхăнса ĕçленĕрен ĕнтĕ кăтартусем те пысăк. Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вĕсем валли жмых илме укçа шеллемеççĕ. Фуражлăх тырра та кунта халех кӳрсе килме килĕшӳ тунă. Тĕрĕс тăваççĕ, хĕл варринче вăл пĕтсе ларсан çеç тырă шырама пуçлани каярах юлма пултарать продуктивлăхшăн. "Орининсем" те ав пĕлтĕрхинчен вылькăх апачĕ сахалрах хатĕрленипе хушма апат-витаминсем халех кӳрсе килме пуçланă.

Куратăр пулĕ, йывăрлăхран тухса малалла каяс текенсем çулне шыраççĕ, майне тупаççĕ. Апла пулсан пĕр-пĕринчен вĕренмелли пурах. Çакнашкал семинар-канашлусен те усси пур.

–Вылькăх-чĕрлĕх отраслĕнчи йывăрлăхсем мĕнлине пĕлетпĕр, вĕсене татса памалли çул-йĕре куратпăр. Апла пулсан ĕçлемелли çеç юлать. Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн А.Н. Ивановăн çак сăмахĕсене камах мĕнех калайĕ хирĕçлесе. Ĕçлемелли çеç юлать.

Л. ПАВЛОВА.

Указа ăнлантарса пани

– Энвер Азизович, 2008 çулта Республика кунне уявласси тата сумлăрах пулĕ. Уяв республикăн икĕ районĕнче иртет. Кунашкал йышăну мĕнпе сăлтавланнă?

– 2008 çулхи Республика кунĕн уйрăмлăхĕ – уява хăрăсах Чăваш Республикин тĕп хулинче тата икĕ районта ирттерни. Йĕпреç тата Муркаш районĕсем халăхăн социаллă пурнăçпа, культурăпа, коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе, транспортпа çыхăннă ыйтăвĕсене тивĕçтерес, çавăн пекех ялсенчи строительствăпа хăтлăх ыйтăвĕсемпе аталанăвăн пысăк шайне кăтартаççĕ.

Ку – районсен хушшинчи çивĕч конкуренци палли. Мĕн пур муниципалитет пĕрлешĕвĕнче çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас енĕпе нумай тăваççĕ, çавăнпа та пĕр района суйласа илме йывăр пулчĕ. Комисси икĕ район Республика кунне ирттермелли вырăн пулма тивĕç тесе йышăнчĕ.

– 2008 çулхи Республика кунĕнчен тата мĕн кĕтмелле?

– Юлашки çулсенче пуçласа Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров Министрсен Кабинетне чикĕ леш енчи тата хамăр çĕршыври пирĕнпе кӳршĕллĕ регионсенчи ĕçлĕ çынсене, пирĕн предприятисемпе çыхăну тытакан компанисене явăçтарса пысăк инвестици форумĕ ирттерме хушрĕ. Чăваш Ен экономикин тĕрлĕ отраслĕнче – машиностроенире, электроприборсем тăвассинче, агропромышленноç комплексĕнче, строительствăра, çавăн пекех общество инфратытăмне аталантарассинче – ĕçлеме лайăх условисем йĕркелес енĕпе республикăра питĕ пысăк ĕç пурнăçлани çапла тума пулăшать.

Ют çĕршывсен агентствисем хаклăнă тăрăх, Чăваш Енĕн инвестици рейтингĕ питĕ пысăк, обществăпа политика лару-тăрăвĕ йĕркеллĕ, çĕршыв ертӳçисен ячĕ-сумĕ пур. Раççей Президенчĕ В.В. Путин панă хаклав та çакнах çирĕплетет.

Çапла çине тăрса ĕçлени тивĕçлĕ кăтарту кӳретех. Пирĕн предприятисем, хуласем, районсем социаллă пурнăçпа экономикăна малалла аталантарма самай пысăк укçа илессе шанма май пур.

– Энвер Азизович, Республика кунĕнче Чăваш Енре темиçе çул йĕркелекен йăлана кĕнĕ мероприятисем пулĕç-и?

– Федераци министерствисемпе пĕрле йĕркелекен мĕн пур мероприятие малалла тăсăпăр. Сăмахран, çитес çул Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн XVI "Раççей çăл куçĕсем" фестивалĕ, Пĕтĕм Раççейри ал ăстисен VI "Астасен Руçĕ" конкурсĕ, спорт ăмăртăвĕсем пулаççĕ. Чăваш Ен çыннисемпе хăнисем хăйне евĕрлĕ çĕнĕ мероприятисене те хутшăнĕç.

"АПК аталантарасси" наци проекчĕ: килти хушма хуçалăх тата фермер çул-йĕрĕ

«Эпир – çĕр ĕçĕнче тарăн тымар янă хресченсем»

Ял хуçалăх çине çĕршыв тимлĕх сахалтарах уйăрать тенине вырăнсене тухсан пачах хирĕçле ӳкерчĕк курăнать. Ĕçлекен хресчен çĕр ĕçĕнчен те самаях тупăш кăларайрать иккен.

Исетерккĕре пурăнакан Александр Аркадьевич Афанасьев нумай ачаллă хресчен çемйинче 14-мĕш ача пулнă. Ăшшĕ – Аркадий Афанасьевич – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕ, вăрçăччен те, вăрçă хыççăн та пĕр хушă ялта колхоз председателĕ пулнă. Района гусеницăллă пĕрремĕш трактор илсе килнĕ те вăрçăра танкист пулнăскер, çĕре кĕричченех механизатор пулса вăй хунă, ачисене çĕр ĕçне тата техникăна хисеплеме вĕрентнĕ. Ĕмĕрĕпе дояркăра тимленĕ амăшĕ – Фекла Егоровна Егорова – ачисенче вылькăхсене юратас туйăма аталантарнă. Мĕн акатăн – çав шăтать. Афанасьевсен таврашĕнче те ĕçрен хăракан, суйнипе пурнăç тăвакан пулман.

– Килти хушма хуçалăхра 40 сотка çĕр пулса. Çĕршывра çĕнĕлĕхсем вăй илме пуçланине кура хам çартан таврăнсан 1992 çулта аннепе килĕшсе 3 пуç сысна илтĕмĕр. Çулталăкран авлантăм та сыснасене самăртас ĕç çине те тимлĕрех пăхма пуçларăм, 7 пуç сысна тытрăмăр вăл çул. Атте-анне кил-çурчĕ çырмаллăрах çĕрте вырнаçнăран 1996 çулта ял хĕрринче пӳрт-çурт лартма çĕр илтĕмĕр. Сысна ĕрчетни тупăшлă тесе çĕн çĕрте чи малтанах сыснасем валли сарай турăмăр, вылькăхсен йышне 27 пуçа çитертĕмĕр, – паллаштарать хăйĕн ĕç пуçламăшĕпе А. Афанасьев çак аталанура Уйкас Янасалти куллен кирлĕ таварсен магазинĕнче сутуçăра ĕçлекен мăшăрĕн Любовь Петровнан тата икĕ ачин тӳпи пуррине палăртса.

Ялти çын килти хушма хуçалăхне картара вылькăх-чĕрлĕх тытса тата пахча çимĕç ӳстерсе тунă продукцие меллĕ вырнаçтарса аталантарни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Акă Афанасьевсем те хăйсен çĕнĕ вырăнĕпе тата ашшĕ-амăшĕн кил хуçалăхĕпе тĕллевлĕ усă курса хăйсен ятне кил-çурт çавăрнă. Кунта кил хуçисем пахча çимĕç продукцине сутма меллĕ вăхăтсем çитиччен сакăр нӳхрепре тытни те вĕсен тăрăшуллă тимлĕхĕ пирки калать. Çĕр улмисĕр пуçне çамрăк çемье симĕс суханпа, хĕрлĕ кăшманпа, кишĕрпе, укроппа ĕçлесе çултан-çул опыт пухса пынă, укçа çулĕ çине тăнă. Акă çулсерен симĕс сухана 1-шер тонна, хĕрлĕ кăшманпа кишĕре 10 тонна ытла, укропа 200-300 килограмм реализацилени ялта пурăнакан нумай çынăн тĕлĕнмелле, анчах пирĕн тĕслĕхре вăл чăн ӳкерчĕк.

– Ялта та ĕçлеме, ĕçлесе укçа тума пулать. Çакна валли рынокри лару-тăрăва курса тăни тата çанă тавăрса ĕçлени, çĕнĕ технологисене вăхăтра алла илни, юнашар ĕçлекенĕн ĕçне шута хуни, шанни кирлĕ. Пирĕн килте ĕнепе сысна усрасси пĕрре те татăлман. Вĕсене пăхнă çĕртех эпĕ хам çартан килсенех хуçалăхра комбайнерта ĕçлесе пĕр çулхине Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхри комбайнерсем хушшинчи ăмăртура 2-мĕш вырăна тухрăм. Исетерккĕсем уйрăм хуçалăха уйрăлса тухсан (Чкалов яч. хис.) мана газ кĕртессипе ĕçлеме шанчĕç. Вырăнти пуçлăхсемпе пĕр чĕлхерен ĕçлесе 2000 çулта Исетерккĕне те, Анаткас Апаша та çут çанталăк газĕ çитертĕмĕр, хыççăнхи çулсенче ĕнесене Исетерккĕри юхăнма пуçланă кивĕ фермăран комплекса куçартăмăр, – каласа парать паян фермер (хресчен) хуçалăхĕ йĕркелес тĕллевлĕ Александр Аркадьевич юлашки çулсенче Раççей тата Чăваш Республикин Президенчĕсем килти хушма хуçалăха аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăрнине ырласа.

Мал туртăмлă çамрăка 2003 çулта Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăха ертсе пыма шанаççĕ. Виçĕ çул вăй хурать вăл çакăнта. Ун хыççăн вара ЧР Президенчĕн указĕпе хавхаланса пуçĕпех килти хушма хуçалăха аталантарас çул çине тăрать, сыснасем пăхас ĕçри çĕнĕ технологисемпе паллашать.

Пурнăçпа тан пыраканăн тĕллевĕнче çавăн чухне çуралать те ĕнтĕ сыснасене типĕлле тăрантарасси тата вĕсене çăмăл конструкциллĕ брезент сарайсенче усрасси. Çакна Афанасьевсем килти хушма хуçалăхра пурнăçа кĕртме тĕллев лартаççĕ. Çиччĕ виç те пĕрре кас, тенĕ ваттисем. Çакна шута хурса Саша та пĕрре мар ку технологипе ĕçлекенсем патĕнче пулать, вĕсен ĕçĕпе паллашать. Ку технологие хăйĕн хушма хуçалăхĕнче пурнăçа кĕртме тăрсан ачаран вылькăх-чĕрлĕхе юратнă çамрăк арçын технологие урай сарассине кĕртет. Анчах ăна вăл пĕр метр çӳлерех хăпартать те паян сыснасен шĕвек каяшĕ аялалла юхса каять, хăйсем патĕнче типĕ, апат памалли кормушкăсем те алă çӳллĕшĕнче. Паян çак сарай пахчара 72 метр тăршшĕ, 9,3 метр сарлакăш вырăн йышăнать, юнашар йывăççем ӳсеççĕ. Хальлĕхе çур сарайĕнче кăна сыснасем тăнăран тепĕр çуррине хресчен утăпа тултарса лартнă: хĕлле утă çăнăхĕ те, ăна айсарăмлăх пани те сыснасемшĕн ытлашши пулмĕ. Çапла шутлать паян Александр Афанасьев. Сарайри 200 пуç сыснана вĕсем çемье вăйĕпех пăхаççĕ. Вылькăхсен рационĕнче паян шыв, курăк, вĕлтĕрен, типĕ апат.

Сыснасене ветеринари тĕлĕшĕнчен Отарккăри ветучасток пăхсах тăрать. Унăн ертӳçине Галина Геннадьевна Михайловна А. Афанасьев ырăпа кăна тав тăвать. Пĕрлехи тимлĕхпе Саша хăйĕн хуçалăхĕнчен кăçал 10 тоннăна яхăн какай реализациленĕ. Ӳсĕм мар-и? Хирĕçле хурав çук.

Кăçал "Сеятель" хуçалăхпа килĕшӳ туса унта арендăна çĕр илнипе килти хушма хуçалăха аталантарнă хуçан фермер (хресчен) хуçалăхĕ йĕркелес тĕллев çуралнă. Çакна валли пĕлтĕрпе кăçал А. Афанасьев "Моргауши-Согласие" кредит кооперативĕнчен пĕр миллион (300 тата 700 пин тенкĕ) тенкĕ ссуда илнĕ. Унпа тĕллевлĕ усă курса кил хуçи хăй туса илнĕ какая сутма Ишекре магазин арендăна илнĕ, сыснасем валли пăхнă сарая туса пĕтернĕ, малалла пăхса МТЗ-892 тракторпа сухапуç тата косилка туяннă. Вĕсем пурте хăйсене ĕçре кăтартнă ĕнтĕ. Çĕнĕ МТЗ-892 тракторпа ĕçлекен "ЧР тава тивĕçлĕ механизаторĕ" Виталий Ксенофонтович Александров хăйĕн пулăшаканĕпе Виктор Варсонофьевич Антоновпа паян талăкĕпех "Сеятель" хуçалăх уйĕсенче çĕртме сухи тăваççĕ. Вĕсем хатĕрленĕ çĕр çине кăçал Нискассисем 298 гектар кĕрхи культурăсем акса та хăварнă ĕнтĕ. Çĕртме сухи тунă лаптăк та 300 гектара хăвалать. Маттур тракторист хыççăн тарăн суха кассисем юлни кунта çитес çул тырă тухăçĕ аван пуласса шантарать.

– Рынок хутшăнăвĕсенче пĕччен ĕçлеме юрамасть. Çак чăнлăха "Сеятель" хуçалăх ертӳçипе А. Соловьевпа пĕр пек ăнланнăран пĕр тĕллевпе ĕçлетпĕр эпир паян, – терĕ пире хиртен ăсатнă май А. Афанасьев (сăн ӳкерчĕкре сулахайран иккĕмĕшĕ). – Çĕртме сухипе пĕрлех хуçалăх çитес çур аки пирки шутлани, çакна валли вĕсем кĕр акире пысăк репродукциллĕ тата элитăллă вăрлăх акса хăварни, çур аки валли 15 тонна элитăллă вăрлăх туянма укçа тӳлесе хуни пире тивĕçтерет. Паян патшалăх ял хуçалăхĕ, килти хушма хуçалăх çине тимлĕх уйăрнă вăхăтра пирĕн тĕллевсем пысăк, вĕсене пурнăçа кĕртме те плансем пур. Кун пирки тепĕр чух калаçăпăр.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.